К 84.8
В 55
Ч-37045

Клавдия Вишневская

# Тӑм шӑхлич



Национальная библиотека ЧР
4-037045

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

К 84.8
В55
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Клавдия
Вишневская

# ТĂМ ШĂХЛИЧ



Кр.

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2001

К84.89(=Чув)6-52

УДК 821.512.111—93
ББК 84 (2 Рос=Чув)—5
В 55

ПРОВЕРЕНО
20 ю 11 ОКТ 2017

Ч-37045

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ISBN 5-7670-1029-3

© Чăваш кĕнеке издательстви, 2001
© Вишневская К. И., 2001





## АЧАСЕМ ВАЛЛИ

Упранать тăванлăх —
Çынсенче палли.
Çĕр çинчи пуянлăх —
Ачасем валли.



# АННЕСЕМ

Тăрипе пĕрле тăраççĕ,
Сывлăмпа питне çăваççĕ,
Ир-ирех ĕçе васкаççĕ
Пирĕн аннесем.

Ĕçлесе чапа тухаççĕ,
Ырă тĕслĕх кăтартаççĕ,
Чăн та пит савăнтараççĕ
Пирĕн аннесем.

Савăк юрă кĕвĕлеççĕ,
Иксĕлми телей пиллеççĕ,
Пурнăçа илем кӳреççĕ
Пирĕн аннесем.





## МИРШĔН

Çĕр çинчи пур чĕрчунсем,
Тӳпери пур кайăксем
Çуралаççĕ пурăнма,
Çут тĕнчешĕн савăнма.

Эпир, пĕчĕк ачасем —
Çĕрĕн сумлă хăнисем,
Савăнасшăн туслăхра,
Тăнăç, ырă пурнăçра.

## ХУРЧКА

Ç ăварна — çу, пырна — пыл! —
Кăшкăратăп хурчкана.
Çакна илтрĕ пулмалла,
Тытрĕ кайрĕ шур чăхха.

Анне килсен ятларĕ:
«Шалча тăрне те», — терĕ.
Хурчка урăх пымарĕ,
Те аннерен хăрарĕ?..

## ТЕВЕТ КĂВАКАЛĂМ

Т евет-тевет кăвакалăм,
Шыв хĕрриневаскакан,
Ялан чуппа чупакан,
Физкультура тăвакан.
Мĕн ĕçтерни-çитерни —
Эс хăçан пысăкланан?



## ЧĔКЕҪ

Шăннă сивĕпе ҫерем,
Курăк та пăрланнă.
Ҫавăнпа чĕкеҫ йĕрет —
Ҫул ҫинче аманнă.

Ҫав чĕкеҫшĕн ман чĕрем
Чăннипех хурланчĕ:
— Уруна ҫыхса чĕркем —
Хăвăртрах сывалччĕ.

## ТĂВАЙККИ

Тăвайкки çине пăхать,
Мĕн ăмсанать Тарас?
— Çӳллĕ çын пулни пахах,
Мĕнле-ши хăпарас?

Патĕнчех тăрать мучи
Ачана витлесе:
— Пысăкскер эп — мĕн усси?
Хăпартмăн-ши тĕксе?

— Эп мучи мар, хăпарас, —
Тапаланать Тарас.





## ВЕРУК

**В**ёлтёр-вёлтёр вёлтёркке,
Çўç çивĕчĕ — хўрешке! —
Халь кулаççĕ Верукран
Кулмалли-мĕн ним çукран.

Хĕрача пĕлет йĕрме,
Ăнланмасть-çке вăл темме:
Чăваш вата-вĕтĕрен
Кулма хушнă ĕлĕкрен.

2. Заказ № К-2648.

## ШУРӐ КАРАП

Шур карап тӑвас текен
Караҫ выртать шутласа.
Тӑрать вӑл ерипелен:
Ӗмӗт курӑнмасть тасан.

Вӑхӑтран анасласа
Караҫ илет карӑнса.
Шухӑш пырать пушанса —
Карап каять саланса.

Карапа шухӑшпалах
Тума ҫук иккен ӑна.
Уншӑн пит тӑрӑшмалла.
Караҫ, туп эс вӑй-хална.





## ЭТВЕР

Ылтăн пуçлă сар хĕвелĕ
Сад пахчине çутатать.
Хăмăр куçлăскер Этверĕм
Улма татса савăнать.

Уçă сывлăшĕ йăвашшăн
Тавралăха çупăрлать.
Татнă çимĕçпе хавассăн
Этвер тусне хăналать.

# ПУЛАС ÇĔВĔÇ

Лавккана кĕрсессĕнех
Маруç курчĕ пукане.
Хĕрача мĕн курнине
Пĕлтерет халь амăшне.

— Туянсамччĕ эс, анне,
Пукане. Вăл тăхăнман.
Эп çĕлем кĕпе-йĕмне,
Çиеле — хура сăхман.

Амăшне ку килĕшет,
Маруç çĕвĕç пултăр тет.
Илсе пачĕ пукане:
— Çĕле, çĕвĕç пулăн тен.



## ЙĂКĂНАТ

Йăкăр-йăкăр Йăкăнат
Ирхине ирех тăрать,
Йыттине апат парать.

Питĕ йăрă Йăкăнат,
Амăшне вăл юрататъ,
Унпа пĕрле тăрмашать.

Пирĕн пĕчĕк Йăкăнат
Ялан чипер курăнать,
Амăшне савăнтарать.



## ХĔВЕЛ АППА

Сив çу пекех юр ирĕлет,
Çурхи çанталăк вăй пухать.
Анне пекех хĕвел ĕçлет,
Мана савса йăл-йăл кулать.

Пичче ирех шкула васкать,
Атте-анне каять ĕçе.
Хĕвел аппа пĕрле юлать,
Вылять ачаш шевле çиçсе.

## ÇУМĂР ТАШШИ

Шăпăр-шăпăр туйăнчĕ,
Шăнкăр-шăнкăр илтĕнчĕ.
Йăлтăр-йăлтăр курăнчĕ,
Чăлтăр-чăлтăр сирпĕнчĕ.



## ĂСЛĂ ПĔЛĔТ

Шуса тухаççĕ пĕлĕтсем,
Хушаççĕ çумăрне çума.
Кăшт çунă хыççăн шунăçем
Хĕвел тухать-çке уçăлма
Илемлĕ сарă хĕр пекех,
Шевле сапать вăл тек-текех.

Ача шутлать хĕпĕртесе
Çак пĕлĕт ăслă пуль тесе.

## ÇĔЛЕН

Хĕвел ăшши çĕлене
Илĕртет ав еплерех.
Тухса выртнă çул çине,
Чĕтретет-çке чĕрене.

## КИРУК

Чанасене сăнаса
Кирук тăрать савăнса.
Пĕри, тепри те хура —
Урисем ав шап-шурах.
Вăл кĕçех унта чĕнет:
— Кур-ха, — тет хăй шăллĕне, —
Сан пушмак епле чăтать?
Ма çумастăн эс атта?



## ВАНЮШ

Ванюш васкать, каять шкула,
Чупать хăй пĕртте савăнмасăр.
Йăл кулă çук мĕне пула? —
Пушмакĕ хĕстерет ним майсăр.

Пăхмасăрах ури çине
Вăл тарăхать: мĕскер амакĕ?
Класра ăнланчĕ вăл тинех —
Ылмаш иккен Ванюш пушмакĕ.

3. Заказ № К-2648.



И-37045
НАЦИОНАЛЬНАЯ
...ЕКА
Чу...ой Республики

# МĂР-МĂР ТУС

Кушак тусĕ пулмашкăн
Пĕчĕк çура туянтăм.
Ăна маттурлатасшăн
Хăймапала йăпатрăм.
Кушак хăйма çимерĕ,
Юлташ пулас темерĕ.

Унăн тусĕ пулмашкăн
Услам çу та пуçларăм.
Мăр-мăра йăпатасшăн —
Вăл патне те пымарĕ.
Кушак çу та çимерĕ,
Юлташ пулас темерĕ.

Кушак тусех пуласшăн
Ĕне сĕтне эп патăм.
Тинех ман тус пуласшăн
Утса пырать йăпатмăш.
Кĕçех сĕте лаккарĕ,
Кайран манпа вылярĕ.



## ШĂШИ

Тĕссĕр тумлă йăрăскер,
Васкаса чупаканскер
Пӳлĕме шăршлать вăр-вар —
Пытанмашкăн кирлĕ мар.

Пурпĕрех вăл пытанать,
Кушакран асăрханать.
Курăнсан вăл хуралта —
Шăши тарĕ хăвăртах.

3*

# ÇĔНĔ ÇУЛ

Шак! шаккарĕ кантăкран
Çил ачи.
Килсе çитрĕ аякран
Хĕл Мучи.
Вăл тултарнă кучченеç,
Пурте халь ăна чĕнеç —
Савнă Хĕл Мучи,
Хаклă Хĕл Мучи.

Ак пуçланчĕ çĕнĕрен
Çĕнĕ кун.
Çитсе кĕчĕ инçетрен
Çĕнĕ çул.
Хаклă парнесем парать —
Пур чуна савăнтарать
Савăк Çĕнĕ çул,
Чаплă Çĕнĕ çул.



# ЁЛКА ЮРРИ

Ç ўллĕ сăрт-ту хыçĕнче,
Çичĕ çырма хӳттинче
Вăрăм чăрăш халь юрлать,
Ун юррипе юр ташлать.

Шурă тумлă Юрпике —
Хитреленнĕ кĕлетке —
Чăрăш çумĕнчех тăрать,
Пилĕкне авса пăхать.

Иккĕшĕн чипер юрри —
Çĕнĕ çулшăн, туйрăр-и?

Камваскатнă вĕсене
Капăр ёлка уявне?

Вашаватлă Хĕл Мучин
Йăлтăртатрĕ чўречи —
Килчĕç унăн шăллĕсем,
Çитрĕç хаклă кўршисем.

Аслă çĕр Юрпикене
Ак тыттарчĕ ачине.
Çĕнĕ çул вăл! Çĕнĕ çул,
Пичĕ-куçĕ ун çап-çут.

Ăшшăн юрă юрласа,
Хĕпĕртесе чуптуса
Çĕнĕ çула Кивĕ çул
Тĕпелелле пачĕ çул.



## ЮРПИКЕ

Шанса ларнă Юрпике
Шеп тăратчĕ нарăсра.
Пуш уйăхĕ çитсенех
Хавшакланчĕ кĕлетке.

## ÇУРКУННЕ

Атте-анне хытарнăччĕ:
— Тулта ан чуп, Тарас!
— Юрать, — тесех шантарнăччĕ.
Епле килте ларас?

Пĕр утăм хăвăрт турăм та
Эп пусрăм теприне.
Епле чупмасăр чăтăн-ха
Чĕнсессĕн çуркунне!..

## ÇУРХИ УРАМ

Йăлтăртатса хĕвел çиçет,
Салхуланса юр каять.
Шăнкăртатса шыв юхать,
Çăмăлттайла çерçи сикет.

Ахăлтатса ача кулать:
Тĕл-тĕл çерем вырăнта
Пĕри çунашка туртать,
Хăй питĕ пĕчĕккĕ курнать.

Айван ача чунтан йĕрет:
— Çунашкапа мĕн тăвас?
Шывпа паллашсан хавас —
Аслашшĕ кимĕ парнелет.

Çуркуннепе ташлакансем
Хушăнаççĕ кунсерен.
Çĕр те сывлать çĕнĕрен
Хĕвел сарри çуталнăçем.



## УРИНЕ

Çутă пĕлĕт,
Кăвак пĕлĕт
Уринен атти пекех.
Ак хĕвел тарса пытанчĕ —
Пĕлĕт тĕсĕ те çухалчĕ.
Хĕрача халь макăрать,
Мĕншĕн тесен пит хăрать:
Атă юлĕ хуралса.

# ÇИТЕРМЕРЕ

Йăрă хĕрачаччĕ,
Вылямa аванччĕ.
Çу кунне кĕтеттĕм —
Эх, çитермине те!..

Тĕрлĕ путек-сурăх,
Эпĕ хам та урăх.
Алăра тутланĕ
Çăкăрпа суханĕ.

Пушă эп тытаттăм,
Çăкăр та параттăм.
Путекне çитетчĕ,
Сурăхне лекместчĕ.

Кĕсьене кĕресшĕн —
Çăкăр вăл çиесшĕн.
Пĕр кĕтӳ мăн сурăх —
Çăкăр çуккă урăх.



## ТУРКАЙ

Тăрăшать Туркай чунтан,
Вăл тăвасшăн яраплан.
Анчах сылтăм çунатти
Çыпçăнмасть, пулмасть латти.

Туркай питĕ тарăхать:
Тăрăшни сая каять.
Асăрхарĕ вăл тинех —
Сĕреймен-çке çилĕмне.

## ШĔШКĔ

Шĕшкĕ тĕмĕ çӳллĕ мар,
Юрамасть ăна хуçма:
Пире мăйăр парнелет,
Тутлă çимĕçне сĕнет.

## ЮМАН

Юманран асли кам пур?
Вăл хăватлă та маттур.
Унăн сар йĕкел нумай,
Кĕркунне ан ман пухма.





## ПӖЛӖН САРӐ ХУРӐНРАН

Кӗркунне пулать вӑл ылтӑн
Ҫулҫӑсем саралнӑран.
«Мӗнле ылтӑн?» — тесе ыйтӑн,
Пӗлӗн сарӑ хурӑнран.



## ТЕТТЕ

Пĕчĕк Митя пасара
Кайрĕ хăйĕн ашшĕпе.
Суйла тетте кăмăлран:
Выльăн кунĕ-кунĕпе.

Пырса кĕнĕ-кĕменех
Курчĕ Митя купăса,
Ярса тытрĕ тракторне,
Кĕтрĕ ашшĕ каласса.

— Хăшне туянасшăн эс? —
Ыйтрĕ ашшĕ Митьăран.
— Кашнинех пĕрер илес, —
Хуравлать ача чунтан.





## «ЖИГУЛИ»

– «Жигули», «Жигули»...
Илсе пар-ха «Жигули», —
Пĕр теттешĕн тек йĕрет
Пĕчĕк Гена ирсерен.

«Жигули», «Жигули»...
Шырать ашшĕ «Жигули».
Çитрĕ пĕтĕм лавккана,
Кайма тиврĕ хулана.

## АН ЙĔР

Пĕчĕкскерĕм, хăмăр куç,
Шеллесе пăхатăн,
Чечек евĕр пăканю* —
Уншăн хуйхăратăн.

Вăл сан чи хакли, ачам,
Куç хупмасть-и пăканя?
Ан йĕр уншăн эс пачах,
Ун ыйхи çапла кăна.



* Пăканя — пукане.



## ТĂМ ШĂХЛИЧ

Тăм шăхличĕ Алмата
Илсе панă пасарта.
Кайăк евĕр, тупата,
Тю-тю-рю! çеç янратать.

Ачасем шăхлич курма
Пухăнаççĕ ун патне.
Тин шутларĕç тăм çăрма —
Ăсталасшăн «кайăкне».

Кашниех сар тăм çăрать,
Янраса тăрать çырма.

Тăмĕ хатĕр — алăра,
Кам пултарĕ майлама?

Маттурри вара Партас,
Пĕтĕм ача тĕлĕнет.
Турĕ вăл шăхлич пит час —
Ёнтĕ «кайăк» ĕнерет.



## ЫЙТУСЕМ

— Кала-ха, аннеçĕм,
Çӳлте, тӳпере,
Мĕнсем чӳхенеççĕ
Ытла та хитрен?

— Тӳпе вĕççĕр-хĕрсĕр,
Çавна эс пĕлсем.
Унта, савнă хĕрĕм,
Çап-çут çăлтăрсем.

— Тата пĕлмес эпĕ:
Мĕн-ши каççерен
Сар çип çăмхи евĕр
Тăрать тӳпере?

— Тĕнче пирĕн тĕрлĕ, —
Анне йăл кулать. —
Пĕлсем, савнă хĕрĕм,
Вăл уйăх пулать.

## МАМĂК МИНТЕР

Тутлă ыйхă çытарри* —
Мамăк — анне пуçтарни.

Пулĕ маншăн чи çемçи
Чĕрĕ ыйхă кӳленçи.

Манăн минтер яланах —
Ырă тĕлĕкри ахах.

Вăл парать мана вăй-хал,
Епле пулăн-ха кахал?



* Çытар — минтер.

## ЙĂПАТМĂШ

Ачам, килех аллăма,
Ик урупа сиккеле.
Ялан сăпкара выртма
Эсĕ текех пĕчĕк мар.

Ачам, тăс аллусене,
Çăтти-çатти çупкалар.
Ан ĕм эс пӳрнӳсене,
Вылясамччĕ ак çапла:

Тыт эс манăн аллăма,
Алă çупса вĕренер
Чĕлхепеле калаçма,
Пĕчĕк урупа утма.



## СĂПКА ЮРРИ

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Сăпка сикет, çывратать,
Ача куçне хуптарать.

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Сăпка лăпкăн тĕлĕрет,
Ачана сунать тивлет.

## ТУТЛĂ ТĔЛĔРСЕМ

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Сиктермешкĕн ачине
Çакнă сарă сăпкине.

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Çывăр канлĕ сăпкара,
Ир пулмасăр ан вăран.

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Ан хăра эс тукмакран*,
Кĕмĕ тилĕ кантăкран.

---

* Тукмак — кашкăр.

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Тутлă-тутлă тĕлĕрсем,
Сывă пулăн çитĕнсен.

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Автан парĕ сассине
Хăваласа ыйхине.

## НЯНЯ* ЮРРИ

Нянине, паппине!
Сăпка юрлать —
Юрласам.

Нянине, паппине!
Выртсан-выртсан
Куç хупсам.

Нянине, паппине!
Мăштăк-мăштăк
Сывласам.

Нянине, паппине!
Ырă тĕлĕк
Эс курсам.

---

* Няня́ — пĕчĕк ача.

# СĂПКА СИККИ

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Ырă-сывă пулнăран
Санăн ыйху тутлăрах,
Çывăр, пепкем, çывăрах.

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Шăрчăк чăр-р! чĕриклетет,
Саншăн юрă ĕнерет.
Çывăр, пепкем, çывăрах.

А-а, ачине,
А-а, паппине.
Ырă ыйхă килнĕрен
Сăпку çемçе пуринчен.
Çывăр, пепкем, çывăрах.



## ПУЙĂС

Пуйăс чăшлатса килет,
Чăш! та чăш! тесе кĕрлет.
Станцире вăл лăпланать,
«Тут!..» сасăпа чаранать.

Чăвашла пĕлмест иккен
Çакă вăйлă хурçă ут.
Пур-ши кунта пĕлекен,
Мĕн тени пулать-ши «тут»?

## ТЕЛЕВИЗОР

Телевизор калаçать,
Телевизор юр юрлать.
Парнелесчĕ пукане —
Уçаймастăп кантăкне.




## ТУПСĂМНЕ ПĔЛ

Чӳречийĕ тăваттах,
Темĕн те пĕр пур унта:
Çимелли, тумланмалли,
Теттесем, çывăрмалли —
Çынсене пурăнмалли.
Мĕн пулать-ши çак арча?
Халь хуравлĕ хăш ача?

(Пӳрт.)

## ИРХИНЕ

Ир пулсассăн йăл кулать,
Кантăкран хĕлхем сапать.
Ырă чун пекех лăпкать,
Ăшшăн-ăшшăн ăратать.
Хăй илемлĕ, вашават,
Кашнинех вăл ачашлать.
Мĕн пулать ку?
Кам калать?

(Хĕвел.)

## ХИТРЕ ХӲРЕ

Хăйĕн хитре хӳрине
Инçе кайсан кăтартать.
Курсассăнах çынсене
Вĕлт! çеç тарса пытанать.

(Тилĕ.)

## ТĂВАТĂ УРА

Тăват ура
Тытнă хулăн хăмана.
Çынсем ларса ун тавра
Апат çиеççĕ — хăв куран.
— Ячĕ мĕнле çак хăман? —
Ыйтать пĕчĕкçĕ Хумма.

(Сĕтел.)

## ÇӲЛЛЕХ ТЕ МАР...

Çӳлти лаптăкне тытма
Унăн пур тăват ура.
Аялтах, çӳллех те мар —
Çитĕнме кирлех те мар.

(Пукан.)

# ТУПМАЛЛИ


Ачасем валли . . . . . . . . . . . 3
Аннесем . . . . . . . . . . . 4
Миршĕн . . . . . . . . . . . 5
Хурчка . . . . . . . . . . . 6
Тевет кăвакалăм . . . . . . . . . —
Чĕкеç . . . . . . . . . . . 7
Тăвайкки . . . . . . . . . . . 8
Верук . . . . . . . . . . . 9
Шурă карап . . . . . . . . . . 10
Этвер . . . . . . . . . . . 11
Пулас çĕвĕç . . . . . . . . . . 12
Йăкăнат . . . . . . . . . . . 13
Хĕвел аппа . . . . . . . . . . 14
Çумăр ташши . . . . . . . . . . —
Ăслă пĕлĕт . . . . . . . . . . 15
Çĕлен . . . . . . . . . . . 16
Кирук . . . . . . . . . . . —
Ванюш . . . . . . . . . . . 17
Мăр-мăр тус . . . . . . . . . . 18
Шăши . . . . . . . . . . . 19
Çĕнĕ çул . . . . . . . . . . 20
Ёлка юрри . . . . . . . . . . 21
Юрпике . . . . . . . . . . . 23
Çуркунне . . . . . . . . . . . —
Çурхи урам . . . . . . . . . . 24
Урине . . . . . . . . . . . 25
Çитермере . . . . . . . . . . 26
Туркай . . . . . . . . . . . 27
Шĕшкĕ . . . . . . . . . . . 28

Юман . . . . . . . . . . . —
Пĕлĕн сарă хурăнран . . . . . . . . 29
Тетте . . . . . . . . . . . 30
«Жигули» . . . . . . . . . . 31
Ан йĕр . . . . . . . . . . . 32
Тăм шăхлич . . . . . . . . . . 33
Ыйтусем . . . . . . . . . . . 35
Мамăк минтер . . . . . . . . . . 36
Йăпатмăш . . . . . . . . . . 37
Сăпка юрри . . . . . . . . . . 38
Тутлă тĕлĕрсем . . . . . . . . . —
Няня юрри . . . . . . . . . . 39
Сăпка сикки . . . . . . . . . . 40
Пуйăс . . . . . . . . . . . 41
Телевизор . . . . . . . . . . —
Тупсăмне пĕл . . . . . . . . . . 42
Ирхине . . . . . . . . . . . 43
Хитре хӳре . . . . . . . . . . —
Тăвата ура . . . . . . . . . . 44
Çӳллех те мар... . . . . . . . . . —




*Литературно-художественное издание*

*Для младшего школьного возраста*

**Клавдия Ивановна Вишневская**

**СВИСТУЛЬКА ГЛИНЯНАЯ**

**ТĂМ ШĂХЛИЧ**

Стихи

На чувашском языке

Редактор *А. К. Шашкина*
Художник *И. Е. Калентьева*
Художественный редактор *Г. А. Игнатьев*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *З. И. Гаврилова*
Компьютерная верстка *Е. Л. Карпеевой*

ИБ 3056
ОКДП 2211202

Изд. лиц. № 010047 от 24.12.96. Подписано к печати 14.06.01. Формат 70x90 1/16.
Бумага офсетная. Гарнитура журнально-рубленая. Печать офсетная. Усл.печ.л.
3,51. Учетно-изд.л. 1,14. Тираж 1000 экз. Заказ № К-2648 . Изд. № 32.

РГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Отпечатано в РГУП «ИПК «Чувашия», 428019,
Чебоксары, пр.Ивана Яковлева, 13.

**Вишневская К. И.**

В 55 Тăм шăхлич: Сăвăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2001. — 46 с.

Кĕнекене ачан тавракурăмне аталантарма пулăшакан, вĕрентсе каланă сăвăсем кĕнĕ.

Кĕçĕн çулхи шкул ачисем валли.

**УДК 821.512.111—93**
**ББК 84 (2 Рос=Чув)—5**

**ISBN 5-7670-1029-3**



Чăваш кĕнеке издательстви